

# Вăрнар тăрăхĕ – истори палăкĕн вырăнĕ

**Иртнĕ уйăх пуçламăшĕнче Чăваш патшалăх гуманитари институчĕн археологĕсем Вăрнар районĕнчи шыравра чăн-чăн тупра тупнă. Эрешсен элеменчĕсем тăрăх ученăйсем ку вырăнта хĕрарăмсене пытарнă пулĕ тесе палăртаççĕ**

**ШЫРАВ**

Экспедиципе ăсчахсем пирĕн района ахальтен тухман. Археологсене хаклă вырăн пирки пĕр «ылтăн шыракан», халăхра вĕсене «хура археологсем» теççĕ, (ятне асăнмаççĕ) пĕлтернĕ.

Институт ĕçченĕсем ку вырăн авалхи масар пулнине çирĕплетеççĕ, историйĕпе вăл пирĕн эрăри II–III ĕмĕрсене тавăрать. Археологи уйрăмĕн кĕçĕн сотрудникĕ Николай Мясников вил тăприсем пулнă вырăнта чавса кăларнă экспонатсемпе паллаштарчĕ: акă хĕр виллин пуçĕ çумĕнче тупнă тăм чӳлмек (ăсчахсем ăна пирĕн эрăри 2–3-мĕш ĕмĕрĕсемпе çыхăнтараççĕ), тĕрлĕ амулетсем, шăрçасем, пăхăр тӳме, сăнă вĕçĕ (ученăйсем ку предмет самай «çамрăкраххине» палăртаççĕ, мĕншĕн тесен ăна вил тăпри çинче тупман). Уйăх ытла тăсăлнă шырав çавăн пекех историлле ытти япаласемпе те пуянланнă: кантăк шăрçасем,



Е.Михайлов.

бронза çакăсем, брошкăсем, пусма татăкĕсем, кăкăр çине çакмалли шăратса тунă япала (шӳлкеме прототипĕ), пластинкăллă капăрлăх, хăлха çаккисем тата ытти хӳхĕм япаласем. Вĕсене археологсем 2х2,5 метр виçеллĕ чавнă шурфра çамрăк хĕрачан вилĕм кĕпи çинчен тупнă.

Пĕтĕмпе археологсем пилĕк виле вырăнне чавнă. Керамика ванчăкĕсем, тĕрлĕ тумтир таврашĕсене тупнă.

Институт ĕçченĕсем кашни экспоната шута илеççĕ, анлăн тĕпчеççĕ. «Хура археологсем» пек вĕсем çĕре çăрса-вартаса пĕтермеççĕ, историлле ӳкерчĕке куç умне кăларас тесе тимлĕ ĕçлеççĕ: вĕсене тупăнакан япаласем кăна мар, вилесем мĕнле выртни, вĕсем пĕр-пĕринпе мĕнле çыхăнни те кăсăклантарать. Çĕрĕн пĕр пайне чавнă хыççăн виле вырăнне шăтăкри паллăпа (вăл тĕспе уйрăлса тăрать) палăртаççĕ, пĕчĕк кĕреçепе темиçешер сехет чаваççĕ.

Евгений Петрович Михайлов, Чăваш патшалăх гуманитари институчĕн археологи пайĕн наукăн аслă сотрудникĕ, ку вырăнта 100-е яхăн виле выртма пултарнине палăртать. Тĕлĕнмелле, кунти çĕрсене вунă çул каялла кăна сухалама пăрахнă, вил тăприсем вара тарăн та мар – 70–80 сантиметр. Археологсен шучĕпе кунта 1700–1800 çул каялла пурăннă финн-угор халăхĕсем вырăнĕ çуллĕрех çĕрте тата хăйăрлă пулнăран суйласа илнипе çыхăнтараççĕ.

Специалистсем Вăрнар тăрăхĕнчи шырав ĕçĕсем историшĕн çав тери хаклине тата пĕлтерĕшлине палăртаççĕ, кунта чавса кăларнă экспонатсем вара кĕçех институтăн музейĕнче вырăн тупĕç.



Н.Мясников.

**С.ЧИКМЯКОВА.**

**АСТĂВĂМ**

# Атте çырнă виç кĕтеслĕ çырусем

Çамрăк чухне эпир темшĕн-çке ĕмĕрлĕхех асăмра хăвармалли япаласене, калăпăр, çырусене, упраса хăварма шутламастпăр. Каярахпа, ватăлсан, вĕсене аса илетпĕр. Хамăрăн тирпейсĕрлĕхе пула хаклă хутсене йĕрсĕр çухататпăр.

Атте, Уйкас Кипекре çуралса ӳснĕ Иван Степанов, вăрçа тухса кайнă чухне хĕрĕх саккăрта, аслă пичче, Валериан Иванов, вун саккăрта пулнă. Вĕсене фронта ăсатнине тĕлĕкри пек çеç астăватăп.

Аттепе пиччерен çырусем час-часах килетчĕç. Пичче – Валерианран кĕçĕнрехххи – тата аппа вĕсене ялти, колхозри лару-тăру çинчен пĕрмаях хыпарласа тăратчĕç. Фронтран килнĕ çырусене манран аслăраххисем хăш числара килнине палăртатчĕç те чĕркесе çиппе çыхса паллă вырăна типтерлĕн пуçтарса хуратчĕç. Чылаях пухăннăччĕ вĕсем. Каярахпа мачча тăррине хăпартса хунăччĕ.

Вăрçă чарăнсан, иртнĕ ĕмĕрĕн аллăмĕш çулĕсенче, кивĕ пӳрте пăсса çĕнетнĕ тапхăрта, çырусене йĕрсĕрех çухатнă. Ун чухне эпир вĕсене хаклама пĕлмен çав.

Юрать-ха аттерен илнĕ виçĕ кĕтеслĕ вунă çырăва Тамара аппа упраса хăварма ăс çитернĕ. Халĕ вĕсене час-часах тытса вулатпăр, хамăрăн ачасемпе мăнуксене те паллаштаратпăр. Кашни çырăва çар цензури пăхса тухнине палăртнă. Лайăх астăватăп: аслă пичче çырăвĕсенчи хăш-пĕр сăмахсемпе йĕркесене вуламалла мар хуратса хунăччĕ – фронтри лару-тăру пирки уççăн çырма юраман. Атте çырăвĕсене вуланă май вăрçă епле хаяр та хăрушă пулнине, тылра та мĕнлерех йывăрлăхсем тӳсме тивнине çĕнĕрен ăнланса илетĕн.

Атте хăй вăхăтĕнче Шăхасанта учителе вĕреннĕ май çырусене пĕр йăнăшсăр илемлĕ шăрçаланă. Виç кĕтеслĕ çырăвĕсене вăл 75724-мĕш номерлĕ уйри почтăран ярса тăнă. Кашнинче тенĕ пекех çак сăмахсемпе пуçланă: «Сывă пурăнатăр-и, чĕппĕмсем Тамара, Илья, Юлия, Вениамин тата чĕппĕмсен амăшĕ Лиза».

«Валерианран сентябрĕн виççĕмĕшĕнче çырнă çырăва илтĕм. Иккĕмĕш хут çăмăл амантăм тесе çырать»,– çапла пĕлтерет атте 1945 çулхи сентябрĕн 30-мĕшĕнче. Валериан – манăн аслă пичче, вун тăххăрти кĕçĕн лейтенант, стрелоксен 214-мĕш полкри взвод командирĕ. Хăй атте патне çыру çырнă хыççăн тепĕр куннех, сентябрĕн 4-мĕшĕнче, Украинăри Харьков хулине ирĕке кăларнă чухне йывăр аманса вилнĕ.

Тепринче атте акă мĕн çырнă: «Илья (ку вун тăваттăри ывăлĕ, манăн тепĕр пичче), çăпанусенчен хăтăлтăн-и? Шкула çӳре, темле йывăр пулсан та вĕренме тăрăш, вĕренни ӳлĕм яланах кирлĕ пулĕ».

«Сирĕн çыруран фермăра миçе пăру пулнине пĕлсе савăнтăм. Тăшмана аякка хăваласа ятăмăр. Йывăр пулсан та чăтăр. Çимелли пĕтсен колхозран ыйтăр. Унтан памасан, çырса хыпарлăр. Тамара (вун улттăри манăн аппа), колхозра тума хушнă хура ĕçе те хутшăн. Вара хăть çимелĕх парĕç. Ку вăхăта чăтса ирттерес пулать. Халь вăрçă нумаях тăсăлмĕ. Тăшмана пурпĕрех çапса аркататпăр»,– ку атте 1944 çулхи март пуçламăшĕнче янă тепĕр çыруран.

Çав çулах, мартăн 12-мĕшĕнче, атте çапла ĕмĕтленет: «Савăнăçлă кунсем килеççех, тăшмана пĕр канăçсăр хăвалатпăр. Юмăç Валериан пурăнать тени тĕрĕс мар пуль. Хамăра лăплантарас тесе çеç çавăн пек калать пуль. Чĕрĕ пулсан ку таранччен çыру çыратчĕ. Вилнĕ тесе военкоматран ахаль хыпарламаççĕ пуль. Ачамсем, тăрăшса пурăнăр. Аннӳ каланă сăмахсене итлĕр. Вĕренме тăрăшăр. Вĕренмен çынна хальхи вăхăтра пурăнма йывăр. Темле пулсан та чăтăр. Вăрçă пурпĕрех вĕçленĕ».

«Мăнкун мĕнле иртрĕ? Мучу патне кайсан пыл çитерчĕ-и? Вăл сире юрататчĕ-ха»,– ку апрельте янă çыруран.

«Урамра лартнă йăмрасем мĕнле ӳсеççĕ? Выльăхсем çăва тĕрĕсех тухрĕç-и? Анкартине мĕнле сухалăр-ши? Çуракине мĕнле ирттерни çинчен хыпарлăр. Эсир кĕтнĕ вăхăта – вăрçă чарăнасса – эпир те вĕçĕмсĕр кĕтетпĕр. Чĕррисем таврăнăпăр-ха. Вилнисем унта ĕмĕрлĕхех юлĕç»,– ялти, килти ĕç-пуçпа кăсăкланнă атте тепĕр çырура.

Вăрçă чарăннă çулхи декабрьте атте киле таврăнчĕ. Ĕмĕрне колхозра ĕçлесе ирттерчĕ, 81 çул пурăнчĕ. Аслă пичче ĕмĕрлĕхех Украина çĕрĕнче выртса юлчĕ. Пурăннă пулсан кăçал 88 çул тултаратчĕ. Вăрçăран таврăннă унăн тантăшĕсем халĕ юлманпа пĕрех.

**Вениамин ИВАНОВ.**

# Мĕн кĕтмелле-ши?

**Июнĕн 22-мĕшĕпе 24-мĕшĕ ман кун-çула гранит палăк çинче аркатнăпа пĕрех касса кĕрсе ларнă. Пĕри – тĕнче вăрçин кунĕ, гитлерла фашизм Европăна, тĕрĕссипе, пĕтĕм çĕр чăмăрне хăрушă хура пĕлĕтпе, мĕнпур тавралăха çунтарса кисретекен çиçĕмпе хупăрланă кун. Тепри – этемлĕхе капашсăр катастрофăран çăлса хăварнине паллă тунă кун.**

**ВĂРÇĂ АЧИСЕН ЯЧĔПЕ**

Ăнлантăр, паллах: 1941-мĕшпе 1945 çулсем пирки сăмах пырать. Пĕри мана тăлăха хăварнă. Тепри – тăлăха юлсан та хӳтлĕхсĕр хăварман. Пĕрне – ĕмĕртен ылханатăп. Тепĕрне – ачаран асăнса тав тăватăп. Çар Парачĕсем – ман кун-çул шăпин уявĕсем. Май килнĕ таран, е кинора, е телекăларăм тăрăх, 1941 çулхи ноябрьти Парадпа 1945 çулхи июньти Парада эпĕ темиçе хутчен те курнă, кайранхисене те пăхнă. Мускава хӳтĕлеме 71 çул каялла Парадран тухнисем çĕнтерӳçĕсен ретĕнче ытти Парадсене те хутшăнатчĕç. Совет Союзĕнче ирттернĕ Парадсем манра ялан хавхалану, мăнкăмăллăх çуратнă. СССР арканчăкĕн пайĕпе тăрса юлнă Раççейре, шел пулин те, Аслă Çĕнтерĕвĕн мухтавлă тĕсне çухатса пыратпăр. Оборонăн çар службинче пулса курман министрне асăрхасанах телевизора сӳнтерсе лартатăп.

Хушăран асилтерсе, 1945 çулхи июнĕн 24-мĕшĕнчи Парада ТВ-кăларăмпа кăтартаççĕ. Стройра – фронтсен пĕрлештернĕ полкĕсем, Оборона наркомĕпе Тинĕс-Çар флочĕн çарĕсем, çар академийĕсемпе училищисем, Мускав гарнизонĕсем. Мускавăн Хĕрлĕ лапамĕ тавра мĕн чухлĕ халăх! Çынсен сăнсăпачĕ çанталăка пăхмасăр савăк та хаваслă. Парад ертӳçисенчен пуçласа кунта пурте çĕнтерӳçĕсем.

Иртнĕ вăрçă хирĕнче пирĕн Шăхальтен 56-ăн вилнĕ. Аманса таврăннисем нумай пурăнмарĕç. Майăн 9-мĕшĕнче вăрçă хăрушлăхĕ пирки сăмах каламалăх фронтовик юлмарĕ. «Нимĕн те Германи тĕшне тăмасть!» тенĕ Совет халăхне чура тума тапăнса килнĕ гитлерла фашистсем. «Ăçта çĕнтеретĕр, çавăнта господин пулатăр!» – çавнашкал авăрланă вĕсене фюрер. «Вĕлерĕр те çунтарăр!– явапне Гитлер хăй çине илнĕ!..» Горбачевпа Ельцин вăхăтĕнчен Совет Союзне аркатма кӳлĕннĕ буржуалла пропаганда ансат кăна лозунгсем кĕрлеттерсе вĕçтерчĕ. Усекен ăру ĕçсĕр аптранипе хупахсенче «Гитлер çĕнтернĕ пулсан, Бавари сăрипе айланаттăмăр!», «Эпир пепси суйласа илтĕмĕр!» тесе кăшкăрашрĕ. Д.Сорос хывнă долларпа евро çинче унанă учебниксем историе ачасене тĕрĕс вĕрентмеççĕ. Горбачевпа Ельцин çулĕсенче истори пăсса çырма суя документсем хатĕрлекен штабсем ĕçленĕ. Акă, вĕсем Катыньпе çыхăнтарнă фальшивкăсене Европа сучĕ йышăнманнине пĕлтĕмĕр.

Гитлер çĕнтернĕ пулсан... «Тĕнчене мĕнпур майпа нимĕçсен çавăрса илмелле. Аслă Германи империне туса хума чи малтанах славян халăхĕсене – вырăссене, поляксене, чехсене, словаксене, болгарсене, украинсене, белоруссене тĕп тумалла». (Фюрерăн «Майн кампф» кĕнекинчен). Гиммлер: «Тухăçсенче нимĕç юнĕ кăна пурăнмалла». Борман: «Çак тĕнчере славянсем кирлĕ мар. Вĕсене хутла вĕрентни хăрушă. Пирĕншĕн марионеткăсем усăллărах». «Нимĕç колонисчĕсене вун тăватă миллион чура çитет»,– тенĕ фашистсем. (Ку ĕнтĕ хальхи Раççей пирки Тетчер, Олбрайт каланисемпе пĕр килет). Тыткăна илнĕ салтаксене выçăпа вĕлернĕ. Мирлĕ халăха 20 миллион пĕтернĕ. Çамрăк çынсене 5 миллион таран чуралăха хăваласа кайнă. Совет Союзĕн территорийĕнче таса сывлăш та, интеллигенци те юлмалла мар, тенĕ.

Эпир, вăрçă ачисем, çак тĕрĕслĕхе истори кĕнекисенчен кăна мар пĕлетпĕр. Ăна халь çитĕнекен ăрăва пĕлтересшĕн мар. Капитализма куçнăранпа ĕнтĕ çирĕм çул вăрçă ачисем ашшĕ-амăшĕсемпе – фашизма çĕнтернисемпе пĕрле хывнă никĕс çинче тытăнса тăратпăр (тĕнчери 1-мĕш атом электростанцийĕ, БАМ, çерем уçса тырпул тунă çĕрсем, хăватлă çĕнĕ заводсем, тӳлевсĕр вĕрентӳпе медицина, космос анлăшĕнчи çитĕнӳсем...). Анчах çак çирĕм çулта влаç хăйех промышленноçри 70 пин, ял хуçалăхĕнчи 28 пин предприятие, 20 пин яла тĕп турĕ (иртнĕ вăрçăри çухатусемпе танлаштарăр). Панкрута тухса пыратпăр-çке... Тĕнчери ĕçлĕлĕх организацийĕ (МОТ) Раççей халăхĕн 90 процентне «чухăн» текен категорипе палăртнă... Шел, çамрăксем çакна та пĕлмеççĕ.

Сталин çулĕсенче пире, вăрçă ачисене, патшалăх пулăшнă, тăлăхсене пособи тӳленĕ, шкул урлă тумтирпе, атă-пушмакпа, хут-кăранташпа, учебниксемпе тивĕçтернĕ, вăтам шкулта, училищĕсенче тӳлевсĕр вĕрентнĕ. Хамăр та аптрамастăмăр. Ватăлтăмăр çав – хавшарăмăр, патшалăха кирлĕ мар пулса тăтăмăр. Вăрçă ачисен вăтам пенсийĕ 6 пин тенкĕрен мала мар. Германире – 1270 евро. Ĕçрисем (хуралтисем, санитаркăсем, уборщицăсем) МРОТ виçипе 4600 тенкĕ илеççĕ. Германири МРОТ – 1030 евро.

Ку çырăва унччен хи пекех (Ç.Ç., мартăн 17-мĕшĕ) «Мĕн кĕтмелле-ши?» ятпа çыртăм. Февраль вĕçĕнче «Вăрçă ачисем» юхăмăн учредительнăй съезчĕ пулнăччĕ. Вăрçă ачисене халь те пулин тыл ĕçченĕсем усă куракан пĕчĕк çеç çăмăллăхсемпе тивĕçтермелле. Пĕтĕмĕшле йышăну çавăн пек. Ку тĕллевлĕ закон проектне Госдумăра миллионер-депутатсем тахçантанпах ниепле те пăхасшăн мар. Мĕн кĕтмелли юлать? Июнĕн çак виçĕ кунĕ тарăн шухăша путарать... Кӳренмелли нумай. Аслă Çĕршывăмăра чĕр тамăкран хăтарнă атте-аннесенчен каçару ыйтма тивет. Хур кӳнĕ вăхăтра хăйсемшĕн тăма пултарасла вăй-халлă фронтовиксем юлмарĕç. Ытла чеен сĕмсĕрле улталанăран эпир вĕсен хутне кĕреймерĕмĕр. Ыран, акă, Республика кунĕ – кăвапинчен В.И.Ленин ячĕпе çыхăннă кун. Мускавра çĕнĕ министрсем хăйсен ĕçне Ильич ятне çĕнĕ хăватпа таткаланинчен тытăнчĕç. Чăн-чăн ĕçпе пĕр-пĕр çĕнтерӳ тăвасчĕ...

**Влад. ИЛЬИН.**

Шăхаль.

# Предостережение о недопустимости нарушения закона

**Прокуратурой Вурнарского района Чувашской Республики по обращению жителей д.8 по ул. Ашмарова п.Вурнары проведена проверка соблюдения требований жилищного законодательства при осуществлении управления данным многоквартирным домом ООО «Инновационные технологии»**

ПРАВО

Установлено, что ООО «Инновационные технологии» с собственниками помещений в указанном многоквартирном доме в соответствии с ч.1 ст. 161 Жилищного кодекса РФ заключены договоры управления многоквартирным домом сроком на 5 лет (до 31.12.2013).

Проведенной проверкой выявлено, что 14 мая 2012 года за подписью директора ООО «Инновационные технологии» собственникам помещений в указанном доме направлены уведомления о расторжении договора управления многоквартирным домом с 1 июля 2012 года.



В соответствии с ч.2 ст. 162 Жилищного кодекса РФ по договору управления многоквартирным домом одна сторона (управляющая организация) по заданию другой стороны (собственников помещений в многоквартирном доме, органов управления товарищества собственников жилья, органов управления жилищного кооператива или органов управления иного специализированного потребительского кооператива либо в случае, предусмотренном ч. 14 ст. 161 настоящего Кодекса, застройщика) в течение согласованного срока за плату обязуется оказывать услуги и выполнять работы по надлежащему содержанию и ремонту общего имущества в таком доме, предоставлять коммунальные услуги собственникам помещений в таком доме и пользующимся помещениями в этом доме лицам, осуществлять иную направленную на достижение целей управления многоквартирным домом деятельность.

Согласно ч.8 ст. 162 Жилищного кодекса РФ изменение и (или) расторжение договора управления многоквартирным домом осуществляются в порядке, предусмотренном гражданским законодательством. Аналогичные нормы прописаны в п.п. 9.3, 9.6 договоров управления многоквартирным домом, заключенным ООО «Инновационные технологии» с собственниками жилых помещений в данном многоквартирном доме.

Статья 450 Гражданского кодекса РФ допускает одностороннее изменение и расторжение договора, если это предусмотрено Гражданским кодексом РФ, иными законами или договором.

При этом в силу ч.2 ст. 450 Гражданского кодекса РФ по требованию одной из сторон договор может быть изменен или расторгнут по решению суда при существенном нарушении договора другой стороной и в иных случаях, предусмотренных настоящим Кодексом, другими законами или договором.

Таким образом, одностороннее без решения суда расторжение договора управления многоквартирным домом ООО «Инновационные технологии» не соответствует требованиям законодательства и нарушает жилищные права собственников помещений в указанном доме.

На основании изложенного, руководствуясь п. 2 ст. 22 и ст. 25.1 Федерального закона «О прокуратуре Российской Федерации»,

ПРЕДОСТЕРЕГАЮ:

Директора ООО «Инновационные технологии» Сантимера Леонида Владимировича, проживающего по адресу: Чувашская Республика, Вурнарский район, п.Вурнары, ул.Банная, д.4, о недопустимости указанных нарушений закона и разъясняю (предупреждаю), что в случае неисполнения требований, указанных в предостережении, вы будете привлечены к ответственности в соответствии с действующим законодательством.

**И. МИФТАХУТДИНОВ,**
**прокурор Вурнарского района советник юстиции.**

# Об организации занятости подростков

**Центр занятости населения организует временную занятость подростков в возрасте от 14 до 18 лет в период всего календарного года. Тем не менее, наибольшая часть подростков, желающих трудиться в свободное от учебы время, приходится на период летних каникул.**

Ведомственной целевой программой содействия занятости населения Чувашской Республики на 2011–2013 годы запланировано в текущем году трудоустроить на временные рабочие места не менее 345 подростков.

Временное трудоустройство несовершеннолетних граждан организуется на основании договоров, заключаемых между центрами занятости населения и работодателями.

На 15 июня текущего года заключено 14 договоров с организациями и учебными заведениями района на создание 194 временных рабочих мест для несовершеннолетних граждан.

Центром занятости населения постоянно проводится информационная работа с подростками и их родителями об условиях организации рабочих мест и видах работ, на которые могут быть трудоустроены несовершеннолетние граждане. Соответствующая информация размещена на сайтах и на информационных стендах центра занятости населения, в средствах массовой информации, специалисты центра занятости рассказывают об этом на профориентационных мероприятиях с учащимися общеобразовательных школ.

Подростки трудоустраиваются по профессиям, не требующим специальной подготовки: разнорабочими по благоустройству и уборке территории и 1 подросток трудоустроен в СХПК «Броневик» пастухом.

Таким образом, кроме получения первого в своей жизни трудового опыта, труд несовершеннолетних граждан несет в себе и социальную направленность.

В приоритетном порядке содействие в трудоустройстве оказывается подросткам, находящимся в трудной жизненной ситуации, и подросткам группы «риска»: из числа сирот или оставшихся без попечения родителей, из семей безработных граждан, многодетных, неполных и неблагополучных семей, состоящих на учете в комиссиях и подразделениях по делам несовершеннолетних граждан, что имеет большое значение для профилактики правонарушений среди подростков.

С начала текущего года на временные рабочие места трудоустроено 171 подросток, из них 87 – из числа находящихся в трудной жизненной ситуации и в группе «риска», что составляет 50,8% от общей численности трудоустроенных, в том числе 22 подростка из неполных и многодетных семей, 65 детей из малообеспеченных семей, 1 подросток – Кураков Илья Алексеевич, учащийся Калининской школы, состоящий на учете в КДН. Из 171 подростка 75 человек в возрасте 14–15 лет, 96 человек – в возрасте 16–17 лет.

В текущем году подростки трудились и трудятся на таких предприятиях, как ООО Агрофирма «Гвардеец», СХПК им. Карла Маркса, СХПК «Броневик», СХПК «Хорнзор», СХПК «Янгорчино», а также в Калининском сельском поселении, МОУ «Вурнарская СОШ № 1», МОУ «Вурнарская СОШ № 2».

На финансирование мероприятий по организации временной занятости несовершеннолетних граждан в свободное от учебы время на 2012 год в республиканском бюджете предусмотрено 212 тыс. 500 рублей, из местного бюджета МОУ «Вурнарская СОШ № 1» и МОУ «Вурнарская СОШ № 2» выделено 50,0 тыс. рублей.

## УГОЛОК ПОЭЗИИ

Янтарный закат подарил мне тебя.
Касанье ладоней и пламень огня.
И карего взгляда чарующий блик.
Мерцание звезд и луны бледный лик.
Об этом нам лето шептало в листве
В хрустальной и чистой рассветной росе.
А может, так время решило за нас,
Едва унося наши души в Парнас.
Лишь ты стала вдруг
моей сердца тоской,
Единственной, нежной и юной красой.
Надеждой и верой и сладостью грез,
Аспидовым ядом и каплями слез.

***

Я долго буду вспоминать:
Их карий взгляд – спокойствие обмана
Во взгляде гибель и редчайшая краса,
И в нем есть жар и холод ятагана.
Я долго буду вспоминать ладони те,
Что ласку и тепло своё дарили,
И что меня безжалостно убили
В полночной безмятежной темноте.
Я долго буду вспоминать тебя,
Ещё всецело ненавидя и любя,
И откликом израненной души
Мне будит волчий вой в ночной тиши.

**В.ГОРКАВЧЕНКО.**

# Каникулы с пользой

Ученики 7 класса с учителем биологии Ласкиной Г.В. совершили экологический поход в Калининский заказник. Поход проведен в рамках республиканской природоохранной акции «Усынови заказник».

В сборе информации о состоянии природных объектов, о наличии редких видов животных и растений оказали большую помощь специалисты Центра внешкольной работы «Эткер» государственного природного заповедника «Присурский». Кандидат биологических наук, орнитолог, научный сотрудник Присурского заповедника Геннадий Исаков знакомил с птицами, а доцент биологических наук Светлана Иванова – с флорой заказника.

На маршруте длиной 15 км ученики узнали как про обычные виды растений и животных, так и про редкие.

Экологический поход был завершен ночевкой в палатках у реки Большой Цивиль.

Во время летних каникул воспитанники спортивно-оздоровительного лагеря «Солнышко» при Калининской школе продолжили знакомство с достопримечательностями родного края и посетили святой источник близ деревни Хумуши. Директор школы Ефимова Т.П. подробно ознакомила с историей источника Предтеча Иоанна Крестителя. После интересного рассказа дети изъявили желание побывать на источнике.

Детей привлекла красивая местность, где гармонично вписывался скромный домик под красной крышей – купель. Некоторые дети изъявили желание окунуться в святом благородном источнике. Одухотворенные дети посидели на пригорке близ источника и поделились своими добрыми поступками и заветными мечтами.

Дети обратили внимание на плетенный забор, плиты, выложенные вокруг домика, с любовью сделанные руками умельцев. Ребят удивила чистота и аккуратность вокруг источника, которую поддерживают местные жители.

**Н.СТЕПАНОВ, М.МАТВЕЕВА, О.АНДРЕЕВА, А.КОНСТАНТИНОВА.**

СТАТИСТИКА

# Условия труда работающих граждан

**Чувашстатом ежегодно проводятся государственные статистические наблюдения за состоянием условий труда работающих на производстве.**

Численность работников, занятых во вредных и опасных условиях труда на конец 2011 года составила почти 39 тыс. человек, или более 40% от численности работников обследованных организаций. В том числе в обрабатывающих производствах сосредоточено 68% от численности занятых на работах с вредными и опасными условиями труда, на транспорте – 12%, в строительстве – 10%, в организациях по производству и распределению электроэнергии, газа и воды – 9%.

На рабочих местах, не отвечающих гигиеническим нормативам условий труда, было занято 26 тыс. человек.

Из общего числа лиц, подверженных профессиональному риску из-за несоблюдения гигиенических нормативов условий труда на их рабочих местах, более 56% работников испытывали воздействие повышенного уровня шума, ультразвука, инфразвука, 42% – работали при повышенной загазованности и запыленности воздуха рабочей зоны, а на 13% работников действовал повышенный уровень вибрации.

На тяжелых работах в Чувашии были заняты около 6 тыс. работников, 30% среди них составляли женщины.

На оборудовании, не отвечающем требованиям охраны труда, работали 392 человека, практически все работники были сосредоточены в организациях по производству транспортных средств и оборудования.

В обрабатывающих производствах и в организациях транспорта на работах, связанных с напряженностью трудового процесса, на конец 2011 года были заняты более 6 тыс. человек, или 7% от численности обследованных организаций.

Законодательством Российской Федерации предусмотрено право работника на компенсации за работу во вредных и опасных условиях труда. По данным обследованных организаций в 2011 году фактические расходы на компенсации и средства индивидуальной защиты составили более 547 млн. рублей, из них 38% израсходованы на оплату спецодежды, спецобуви и других средств индивидуальной защиты, 27% – на оплату труда в повышенном размере, 18% – на оплату дополнительного отпуска, 10% – на оплату молока или других равноценных пищевых продуктов и 7% – на оплату лечебно-профилактического питания. В среднем на одного работника, имеющего право на компенсации, приходилось 3739 рублей.

**А. НИКИТИНА,**
**отдел статистики труда, науки, образования, культуры, торговли и услуг Чувашстата.**

